25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
АПРЕЛЬ
19
ВЫРСАРНИКУН
92(6057) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, [illegible]

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе пысăк тухăçлăхпа тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн, ВКП(б) райкомĕсемпе ĕççынни депутачĕсен районсенчи Совечĕсен исполкомĕсем тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

78. Семен Сергеевич Карлин—Елчĕк МТС-ĕнчи механик. Карлин юлташ тракторсене срокченех юсаса çитернĕ, тракторсен пур бригадисене те тракторсем юсас ĕçре ырми-канми пулăшса пырать.

79. Ефим Андреевич Мясников—Елчĕк МТС-ĕнчи тракторсен 11-мĕш бригадин бригадирĕ. Мясников юлташăн бригади 1942 çулти мартăн 15-мĕш тĕлне тракторсене тата вĕсен çумне кăкарса ĕçлемелли ялхуçалăх машинисене пĕтĕмпех лайăх пахалăхпа юсаса çитернĕ.

80. Евгений Васильевич Цыганов—Елчĕк МТС-ĕнчи тракторист. Цыганов юлташ 1942 çулти мартăн 5-мĕш тĕлне хăйĕн тракторне тета ялхуçалăх машинисене лайăх пахалăхпа юсаса çитернĕ.

81. Георгий Николаевич Струнков—Елчĕк МТС-ĕнчи тракторсен 10-мĕш бригадин бригадирĕ. Струнков юлташăн бригади 1942 çулти мартăн 15-мĕш тĕлне 4 трактора тата ытти ялхуçалăх машинисене лайăх пахалăхпа юсаса çитернĕ.

82. Алексей Васильевич Филиппов—Елчĕк МТС-ĕнчи тракторист. Филиппов юлташ хăйĕн тракторне 1941 çулти декабрĕн 10-мĕшченех юсаса çитернĕ, унтанпа пĕрмаях ытти тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсанă çĕрте ĕçлет.

83. Илья Ильич Катюков—Елчĕк МТС-ĕнчи тракторсен 1-мĕш бригадин тракторисчĕ. Катюков юлташ хăйĕн тракторне тата ялхуçалăх машинисене 1941 çулти декабрĕн 1-мĕшченех лайăх пахалăхпа юсаса çитернĕ.

84. Аркадий Захарович Абдулкин—Елчĕк МТС-ĕнчи тракторист. Абдулкин юлташ хăйĕн тракторне тата ытти ялхуçалăх машинисене 1941 çулти декабрĕн 15-мĕшченех лайăх пахалăхпа юсаса çитернĕ.

Тупăшсене валеçес ĕçе хăвăртрах вĕçлемелле

СССР Наркомземĕн приказĕ тăрăх февралĕн 1-мĕш тĕлне пур колхозсен те 1941 çулти ялхуçалăх ĕçĕсен çулталăкри отчетне туса колхозниксен пĕрлешӳллĕ пухăвĕсенче çирĕплетмелле пулнă. Мартăн 1-мĕшĕччен вăл отчетсене райсовет исполкомĕсен пăхса тухмалла пулнă.

Çулталăкри ĕçсен отчетне вăхăтра туни колхозниксемпе колхозницăсен интересне татса парать. Вăл отчета тумасăр, колхоз ĕçкунĕсем тăрăх тупăшсене валеçсе пама, колхозниксемпе колхозницăсене вĕсем ĕçлесе тунă ĕçкунĕсем тăрăх тивекен тырра пĕтĕмĕшпех валеçсе пама пултараймасть, отчет хатĕр марри ĕçшĕн хушса тӳлес ĕçе те чарса тăрать.

Çулталăкри ĕçсен отчетне вăхăтра туни питех те кирлине шута илсе, Вăрнар, Канаш районĕнчи колхозсем 1941 çулти ĕçсен отчетне туса çитерчĕç. Вăрнар районĕнчи колхозсем ку тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлерĕç. Отчетсем хатĕрлес тĕлĕшпе Чкаловски, Советски районсенчи çĕрĕç оргăнĕсем те начар мар ĕçлеççĕ. Канаш райсовет исполкомĕ 39 колхозăн очетне пăхса тухса çирĕплетнĕ. Советски районра 2 колхоз, Чкаловски районра 8 колхоз çеç отчетсем çырса пĕтермен.

Республикăра 1941 çулти ялхуçалăх ĕçĕсен çулталăкри отчечĕсене çырас ĕç вăраххăн пулса пырать, çавăн пирки вара колхозсенче тупăшсем валеçес ĕç те чарăнса тăрать. Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ, районсенчи çĕрĕç оргăнĕсем СССР Наркомземĕн приказне вăхăтра пурнăçлассишĕн çителĕксĕр кĕрешеççĕ.

Апрелĕн 10-мĕш тĕлне республикăра мĕнпурĕ 1.119 колхоз çеç отчетсем çырнă; колхозниксен пухăвĕсенче 962 отчет, райсовет исполкомĕсен ларăвĕсенче 507 отчет çеç пăхса тухнă. Хăшпĕр районсенчи çĕрĕç пайĕсем СССР Наркомземĕн приказне пурнăçлас тĕлĕшпе ответлăха туймаççĕ. Тĕслĕхрен, Улатăр районĕнчи 28 колхозран 7 колхоз кăна отчетсем çырнă, вĕсене те колхозниксен пухăвĕнче пăхса тухман. Кувакино районĕнче пурĕ те 17 колхоз кăна. Вĕсенчен те 6 колхоз çеç отчетсем çырнă.

Ĕç çакăн пек пулса пынине мала тӳсме çук. Çулталăкри ĕçсен отчечĕсене çырманни колхозсене çуракине йĕркеллĕн хатĕрленме кансĕрлет. Иртнĕ çулхи ĕçсен отчетне тумасăр колхозсен кăçал тумалли ĕçĕсен производствăллă планне тума май çук, бригадăсемпе звеносене организациленĕ çĕрте иртнĕ çулхи ĕç опычĕсене шута илме, тыр пул туса илес плана бригадăсемпе звеносене ăнлантарса пама çук. Колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх тата ĕçшĕн хушса тӳлес йĕркепе тивекен тупăша вăхăтра валеçсе памасни кахалсемшĕн çеç усăллă.

Çавăнпа ĕнтĕ колхозсен иртнĕ çулхи ĕçĕсен отчетне çырас, ăна пăхса тухса çирĕплетес ĕçе хăвăртрах туса çитермелле, тупăшсене валеçессине хăвăртрах тата ăнăçлăн вĕçлемелле. Кашни колхозник, колхозница хăйне тивĕç тупăша пĕтĕмĕшпех илтĕр.

Хăшпĕр районсенчи çĕрĕç пайĕсен руководителĕсем тупăшсене валеçес ĕç чарăнса тăнине тĕрлĕ майсемпе ăнлантарса пама тăрăшаççĕ. Хăйсем ĕçе организацилеме пĕлменнине вăрçă условийĕнчи йывăрлăхсемпе витме пăхаççĕ. Йывăрлăхсем пур, вĕсем пуриншĕн те паллă, анчах вĕсене пирĕн çĕнтермелле, çакă вăл пирĕн задача.

Советски районри çĕрĕç пайĕ çак ĕçе ăнăçлăн вĕçленĕ счетоводсене юлса пыракан колхозсенче отчетсем çырма мобилизациленĕ. «Красное Сормово» колхоз счетоводĕ Петров юлташ районри 6 колхоза отчет çырма пулăшнă. «Пучах» колхоз счетоводĕ Николаев юлташ хăйсен колхозĕнче ĕçе аван вĕçлесе, «Коминтерн», «Металлист» тата Киров ячĕпе тăракан колхозсене отчет çырса панă. Çак лайăх примерпа усă курса, отчетсем çырас ĕçе хăлех вĕçлес пулать. Çакна ăнланни кирлĕ: отчетсене хатĕрлесе çитерни, çапла вара тупăшсене валеçес ĕçе вĕçлени—политикăллă пысăк ĕç пулса тăрать.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

ССР Союзĕн минометнăй вооружени Наркомачĕн 808-мĕш, 718-мĕш номерлĕ тата Ф. Энгельс ячĕпе тăракан завочĕсене Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăлесси çинчен

Минометсем туса кăларас тĕлĕшпе Правительство панă заданисене кăтартуллăн пурнăçа кĕртсе пынăшăн ССР Союзĕн минометнăй вооружени Наркомачĕн çак завочĕсене **Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав** орденĕпе наградăлас:

1. 808-мĕш номерлĕ завода.
2. 718-мĕш номерлĕ завода.
3. Ф. Энгельс ячĕпе тăракан завода.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти апрелĕн 16-мĕш.

Паян—Шупашкар ĕççыннийĕсен массăллă воскресникĕ

Паян, апрелĕн 19-мĕшĕнче, Шупашкар хулинчи ĕççыннисем массăллă воскресник туса ирттереççĕ. Воскресник, тасалăхшăн пуçланнă кĕрешĕве пĕтĕм ĕçхалăхĕ хутшăннă май, хула хушшине тата хула таврашĕнчи вырăнсене тасатса тирпейлес тĕлĕшпе пулса иртет. Воскресника хулари мĕн-пур предприятисемпе учрежденисенче ĕçлекенсем пурте хутшăнаççĕ.

Воскресника тухакан рабочисемпе служащисем ирхине ирех Шупашкар чугунçул станцине пухăнса çитеççĕ. Унта массăллă воскресникпе чугунçул станцине ĕçкунчехи пылчăкран тата ытти тирпейсĕрлĕхрен тасатаççĕ.

Заем сарас ĕçе вăйсăрлатмалла мар, вăйлатса пымалла

60.658.000 тенкĕлĕх сарнă

Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне сарас ĕç ăнăçлăн пулса пырать. Тăватă кун хушшинче заема хуласенче 23.638.000 тенкĕлĕх, ялсенче 26.885.000 тенкĕлĕх, колхозсемпе артельсенче 10.135.000 тенкĕлĕх сарнă. Шупашкарти ĕççыннисем заема 6.122.000 тенкĕлĕх çырăннă. Республикăра пĕтĕмпе 60.658.000 тенкĕлĕх вырнаçтарнă.

Анчах çав вăхăтрах заема сарас тĕлĕшпе юлса пыракансем те пур-ха. Канашпа Çĕмĕрле хулисем тата Йĕпреç районĕ заема рабочисемпе служащисем хушшинче бюджетпа пăхнă чухлĕ сарса çитермен. Партипе совет организацисен, финанс оргăнĕсен халĕ: «Облигаци илмесĕр пĕр гражданин та ан юлтăр!» текен лозунга пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешес пулать.

Заема сарнă вăхăтрах унăн укçине пухас ĕçе те манма юрамасть. Ку тĕлĕшпе малта пыракан Сĕнтĕр, Вăрмар, Хĕрлĕ Чутай, Елчĕк, Шăхасан, Чкаловски, Советски районсем пример кăтартаççĕ. Анчах Канаш, Улатăр, Кувакино, Йĕпреç, Сĕнтĕрвăрри, Етĕрне, Куславкка районĕсем подписка укçине пухас ĕç çине çителĕксĕр çаврăнса пăхаççĕ.

Заем сарас ĕçре тунă ӳсĕмсемпе лăпланса лармалла мар, ăна пĕрмаях вăйлатса пымалла.

Подписка укçине тӳлеççĕ

СĔНТĔР. **(Хамăр корр.).** Районра заема вырнаçтарнă вăхăтрах унăн укçине пухас ĕç анлăн сарăлса кайрĕ. Апрелĕн 17-мĕш тĕлне заем укçине районĕпе 1.778.000 тенкĕ пухнă. Вăл шутран «Красный Октябрь» колхозра 32.625 тенкĕ, «Восток» колхозра 31.490 тенкĕ, «Гигант» колхозра 22.430 тенкĕ, «Заря» колхозра 19.050 тенкĕ, Шмидт ячĕпе тăракан колхозра 12.400 тенкĕ пухса панă.

Подписка укçине тӳлес тĕлĕшпе ялти активистсем пример кăтартаççĕ. Муркаш ялсоветне кĕрекен «Знамя труда» колхоз фермин заведующийĕ Ярдыков юлташ 2.500 тенкĕ, «Буденный» колхоз председателĕ Кольцов юлташ 2.000 тенкĕ, «Авангард» колхоз председателĕ Константинов юлташ 1.000 тенкĕ тӳленĕ.

Çавăн пекех çĕнĕ заема Çатракасси ялсоветне кĕрекен «Малалла» тата Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсен председателĕсем Григорьевпа Землемеров юлташсем 1.500-шер тенкĕлĕх, «Пионер» колхоз председателĕпе счетоводĕ Г. Кирилловпа Т. Сергеев юлташсем 1000-шер тенкĕлĕх, ферма заведующийĕ Герасимова юлташ 500 тенкĕлĕх тата уйхир ĕçĕсен бригадирĕ Семенов юлташ 500 тенкĕлĕх çырăнса, укçине те çийĕнчех тӳленĕ.

„Урожай“ колхоз пример кăтартать

КӲКЕÇ. Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне районра малтанхи икĕ кун хушшинчех 1.352.100 тенкĕлĕх сарнă. Вăл шутран колхозсемпе артельсем заемăн процентлă кăларăмне 407.000 тенкĕлĕх çырăннă.

Çĕнĕ заема вырнаçтарас тĕлĕшпе районра «Урожай» колхоз пример кăтарать. Кунта заема колхозниксем хушшинче 15.000 тенкĕлĕх сарнă, унсăр пуçне колхоз хăй 10.000 тенкĕлĕх çырăннă. Подписка укçине колхоз та, колхозниксем те пĕтĕмпех тӳлесе татнă. Ку ĕçре уйрăмăнах колхоз председателĕ Кузнецов юлташ тăрăшса ĕçлерĕ.

Заем сарас тĕлĕшпе «Первое мая», «Кормилец», «Трактор» колхозсенче те лайăх ĕçлеççĕ. «Первое мая» колхозра заема 61 пин тенкĕлĕх сарса, укçине 42 пин тенкĕ тӳленĕ.

А. МИХАЙЛОВ.

Заем укçине пухасси юлса пырать

КАНАШ, апрелĕн 18-мĕш. **(Телефонпа).** Районри ĕççыннисем вăрçă вăхăтĕнчи заема пысăк хавасăлăхпа çырăнаççĕ. Вĕсем пурте пĕр шухăшлă пулса хăйсен средствисене государствăна кивçен параççĕ. Шаккăлти «Искра» колхоз членĕсем çĕнĕ заема 45.865 тенкĕлĕх, Çĕнĕ Шелттемри «Хĕрлĕ çăлтăр» колхоз членĕсем 40.725 тенкĕлĕх çырăннă. «Хĕрлĕ çăлтăр» колхоз председателĕ Викторов юлташ заема 3.000 тенкĕлĕх, бригадирсем Филимоновпа Порфирьев юлташсем 1.000-шер тенкĕлĕх çырăнса, укçине те тӳленĕ. Ку колхозра подписка укçине пурĕ 23.000 тенкĕ пухса панă.

Анчах районра подписка укçине пухас ĕç халĕ çителĕксĕр пырать-ха. Районĕпе мĕнпурĕ те 274.000 тенкĕ кăна пухнă. «Броневик», «Ударник», «III-я Пятилетка» тата Максим Горький ячĕпе тăракан колхозсенче укçа пухма тытăнман та темелле. Ялсовет, колхоз руководителĕсен, финанс работникĕсен заема сарнă вăхăтрах подписка укçине те пухма тăрăшмалла.

Ф. МАЛЫШКИН.

Малтанхи кунах вĕçлерĕç

ТĂВАЙ. Отечественнăй аслă вăрçă заемне сарас ĕçе машинно-тракторнăй станцире ĕçлекенсем хушшинче малтанхи кунах вĕçлерĕç. Кунти служащисемпе трактористсем çĕнĕ заема 63.000 тенкĕлĕх çырăнчĕç. Çак ĕçре ĕнтĕ трактористсем хăйсен патриотизмне палăртрĕç. С. Хайдуков, Н. Федорова, А. Иванова юлташсем заема 1.200-шер тенкĕлĕх, А. Чернов, Т. Александрова юлташсем 1.000-шер тенкĕлĕх çырăнса, укçине те пĕтĕмпех парса татрĕç. Çавăн пекех П. Коровин юлташ та 1.500 тенкĕлĕх çырăнса — 800 тенкĕ, С. Васильев 1.200 тенкĕлĕх çырăнса — 600 тенкĕ тӳлерĕ.

В. ЧЕРНОВ.

Май уявĕ умĕнхи ăмăрту

Планран ирттерсе

ÇĔМĔРЛЕ. **(«Чăваш Коммуни» корр.).** Комбинатри стахановецсем, Май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, хăйсем çине илнĕ обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Вĕсем апрелĕн малтанхи 10 кунĕнче кăна планран ирттерсе темиçе пиншер тенкĕлĕх продукци туса кăларчĕç.

8-мĕш номерлĕ цех коллективĕ куллен хăйĕн заданине 125—135 процент тултарать. Вăл апрель уйăхĕн планне 25 кун хушшинче 130 процент тултарма обязательство илнĕ.

Типĕтмелли цех март уйăхĕнче ĕç тухăçлăхне 30 процент ӳстерсе ĕçленĕ. Чи малта пыракан Утехина бригади хăйне панă задание 195 процент тултарнă. Ку цехра халь нормăна тултарайман рабочи çук. Цехри рабочисем тунă çитĕнĕве çирĕплетсех пыраççĕ. Юлашки вăхăтра вĕсем плана куллен 130—140 процент тултараççĕ.

Кузовной цехра апрель уйăхĕ пуçланнăранпа уйрăмăнах хĕрарăмсем пысăк тухăçлăхпа ĕçлеççĕ. Склейщицăсем Шолкова, Бутузова, Баранкина, Волкова юлташсем сменăра ик-виçĕ норма тăваççĕ.

ЙЫВĂР СОСТАВСЕМ ИЛСЕ ÇӲРЕÇÇĔ

КАНАШ. Депори машинистсем ĕççыннисен уявне хатĕрленнĕ май çĕнĕрен çĕнĕ çитĕнӳсем тăваççĕ. Машинист Николаевпа унăн помощникĕ Андреев юлташсем 3 пин тонна тиенĕ йывăр составсене Канашпа Сергач хушшинче тăтăшах илсе çӳреççĕ.

Машинист Крехниковпа унăн помощникĕ Ефремов юлташсем те 2.965 тонна тиенĕ йывăр состава Канашран Çĕмĕрлене хăвăрт тата ăнăçлă илсе çитернĕ. Март уйăхĕнче вĕсем 10 тонна çĕркăмрăкĕ перекетлесе хăварнă.

П. С.

ГРАНАТОМЕТЧИКСЕН ĂМĂРТĂВĔ

ЧКАЛОВСКОЕ. **(Телефонпа, хамăр корр.).** Комсомолецсемпе çамрăксен граната ывăтас тĕлĕшпе пыракан республикăри ăмăртăвне районри çамрăксем активлăн хутшăнаççĕ. Анат Туçара, комсомол комитечĕ ертсе пынипе, ăмăртăва 143 çамрăк хутшăннă, вĕсенчен 137 çын нормăсем панă. Çавăн пекех Аслă Патăрьелпе Чкаловски вăтам шкулта вĕренекенсем те ăмăртăва хастарлăн хутшăннă. Апрелĕн 16-мĕшĕнче пулса иртнĕ ăмăртура Чкаловски вăтам шкултан 134 çын, Патăрьел шкулĕнчен 127 çын пулнă.

Колхоз çамрăкĕсем те çак енĕпе ăмăртăва хутшăнса паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. «Çăлтăр» колхозра—73 çамрăк, «Нариман» колхозра—26 çамрăк, Молотов ячĕпе тăракан колхозра—31 çамрăк ăмăртăва хутшăннă.

Гранатометчиксен заочнăй ăмăртăвне районĕпе пурĕ 918 çын хутшăнса, 813 çын ГТО значокĕсен нор[illegible] панă.

П. НИКОЛАЕВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Апрелĕн 17-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 17-мĕшĕнче фронтăн хăшпĕр участокĕсенче пирĕн войскăсем, наступлениллĕ çапăçусем туса пырса, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă.

Апрелĕн 16-мĕшĕнче нимĕçсен 15 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 5 самолет пĕтнĕ.

* * *

Апрелĕн 16-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем нимĕçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 27 автомашинине, 6 полевой орудине, зенитнăй пулеметсен 2 точкине тата 9 минометне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн боецсем, танксем пулăшнипе, нимĕçсем йышăнса илнĕ халăх пурăнакан пĕр пункта çĕмĕрсе кĕнĕ. Çав ялăн урамĕсенче тата унтан такнă чухне противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 300 çын ытла вилсе пĕтнĕ, пирĕн боецсем тăшманăн 9 пулеметне тата 2 минометне пĕтерсе тăкнă. Фронтăн тепĕр участокĕнче пирĕн стрелковăй часть нимĕçсен пехотин контратакине сирсе пăрахнă. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсен 200 виллине çити выртса юлнă.

* * *

Калинин фрончĕн уйрăм участокĕсенче пирĕн войскăсем тунă çапăçусене пула гитлеровецсен салтакĕсемпе офицерĕсем 600 çын ытла вилсе пĕтнĕ, противник тата çар техникине нумай çухатнă. Пирĕннисем трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Воротников юлташ командир пулса тăракан артиллеристсен подразделенийĕ орудисенчен персе юлашки уйăх хушшинче тăшманăн 8 дзотне тата 3? блиндажне çĕмĕрсе тăкнă, нимĕçсен 3 танкне, 3 орудине, 20 пулеметне, 5 минометне, грузсем тиенĕ 6 лавне пĕтерсе тăкнă тата противникăн чĕрĕ вăйне пысăк сиен кӳнĕ.

* * *

Нимĕçсен бомбардировщикĕсем чугунçул станцийĕ çине вĕçсе пырса тапăннă чухне боеприпассем тиенĕ икĕ вагона вут хыпса илнĕ. Хăрушлăха пăхмасăрах, Корчемаха сержант, Крючковпа Золотов красноармеецсемпе пĕрле, çунакан вагонсене поездран вĕçертсе илнĕ те çапла паха çар грузне пĕтесрен çăлса хăварнă.

* * *

Ленинград партизанĕсен Р. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ çак кунсенче нимĕçсен халăх пурăнакан пĕр пунктри гарнизонĕ çине пырса тапăннă. Партизансем нимĕçсен 35 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă, противникăн 2 станковăй тата 4 ручной пулеметне стройран кăларнă.

* * *

Нимĕçсен 32-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 96-мĕш полкăн разведка тăвакан отрядĕнчен тыткăна лекнĕ салтак Макс Винтер çапла каласа панă: «32-мĕш дивизи пĕлтĕрхи октябрьтех пысăк çухатусем тӳснĕччĕ. Эпĕ ун чухне санитар пулнă. Икĕ эрне хушшинче пирĕн пункта кашни кун аманнă салтаксене 70 çынран пуçласа 100 çын таран илсе пыратчĕç. Вилнисен шучĕ кунтан нумай ытларах пулнă. Юлашки вăхăтра пирĕн дивизие вырăссем темиçе хутчен атакăларĕç. Дивизин çухатăвĕсем вара татах та ытларах ӳссе кайрĕç. Дивизие çавăрса илнине салтаксем пĕлнĕ. Шухăш кăмăлсем пурин те пусăрăнчăк. Салтаксене паракан паек куллен кун чакса пырать. Вырăссен çĕр çинче тата сывлăшран тăтăшах тăвакан атакисем пире халтан ячĕç. Пысăк асапсем тӳсмелле пулни тата чăтма çук йывăр условисем салтаксен сăнне улăштарчĕç. Нумайĕшĕсем, алăсене усса, ним йĕркесĕр пурăна пуçларĕç. Варалансчăк çӳреççĕ, гигиенăн чи çăмăл правилисене те тытса пымаççĕ. Салтаксемшĕн пулăн халь ĕнтĕ пурте пĕрех, вĕсем пурин çине те пĕр савăнмасăр пăха пуçларĕç».

* * *

Халăхшăн тавăракан партизансем нимĕçсен фашистла захватчикĕсене пĕр канăç памасăр йĕрлесе хĕссе пыраççĕ. Советсен оккупациленĕ районĕсенче гитлеровецсем хăйсене вĕлересрен яланах хăраса тăраççĕ. Акă мĕн çырать нимĕç салтакĕ Горт хăйĕн пĕлĕшĕ Геди патне: «...Пирĕн каллех, мур пĕлет-и ăна, темскер пула пуçларĕ. Вунă кун каярах пирĕн полкран, партизансене хирĕç кĕрешме тесе, пĕр рота салтак уйăрса илчĕç. Тĕлĕнсе каймалла — фронтран 200 километр шалта çапăçусем пыраççĕ. Кунта партизансене хирĕç пĕр чарăнми вăрçă пырать, партизансем вĕсем пире яланах кансĕрлеççĕ. Анчах çак кĕрешӳ вăл пире çĕнĕрен те çĕнĕ çухатусем кӳрет. Хăвах куратăн, кунта та пурнăç пирĕн çӳç пĕрчи çинче çеç тытăнса тăрать».

* * *

Нимĕç захватчикĕсенчен икĕ уйăх ытла каярах тытса илнĕ Лозовая хулинче гитлеровецсем унта тăнă чухне тунă ирсĕр преступленисен çĕнĕ те çĕнĕ факчĕсем халь те çиеле тухса пыраççĕ-ха. Çак кунсенче, Военстрой çурчĕн подвалĕсене тĕрĕслесе пăхса тухнă чухне, хулара тата таврари ялсенче пурăнакан 9 çыннăн виллине тупнă, вĕсене нимĕçсем персе пăрахнă пулнă.

* * *

Югослави партизанĕсем çак кунсенче Итали оккупанчĕсене вăйлăн пырса çапнă. Сараево хулинчен кăнтăр енчи çула пӳлсе хурса, партизансем итальянецсен пысăк обоза сыхласа пыракан стрелокĕсен батальонне çĕмĕрсе тăкнă. Югослави партизанĕсем трофейăсем тытса илнĕ.

Апрелĕн 18-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 18-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле паллă улшăнусем те пулман.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн чаçсем пĕр кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен 35 дзотне, 10 блиндажне çĕмĕрнĕ, 2 танкне, артиллерипе минометсен батарейисене, 6 пулеметне, грузсемпе боеприпассем тиенĕ 6 автомашинине пĕтерсе тăкнă. Противникăн тылĕнче боеприпассен 2 складне сирпĕнтерсе янă. Çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: танкетка, планер, минометсен батарейи, 3 пулемет, танксене хирĕç пемелли пăшалсем, 5 автомашина тата грузсем тиенĕ 13 лав. Нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 800 çын ытла вилсе пĕтнĕ.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн боецсем, нимĕçсем хирĕç тăнине çĕнтерсе, противникăн оборона тытмалли темиçе пунктне йышăнса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшман салтакĕсен çĕршер виллисем выртса юлнă. Нимĕçсенне 8 оруди, 21 пулемет, 100 ытла винтовка, 6 автомат, миномет тата ытти трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн пехотинецсем, артиллери пулăшса тăнипе, нимĕçсене атакăланă та тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 150 çынна пĕтерсе тăкнă.

* * *

Гитлеровецсем вырнаçса ларнă яла танкист Лешинский юлташ çĕмĕрсе кĕнĕ те нимĕçсен 4 орудине, автоматчиксем ларса пыракан 2 автомашинине пĕтерсе тăкнă тата пулеметсен 6 точкине пусарса лартнă.

* * *

Смоленск партизанĕсен Н. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ тăшманăн колонни куçса пыракан çул çинче засада тунă. Партизансем гитлеровецсем çине автоматсенчен тата ручной пулеметсенчен пеме пуçланă. Çав операцире противникăн 60 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Партизансен аллине нумай хĕçпăшал тата çар пурлăхĕсем тиенĕ темиçе грузовой машина лекнĕ.

* * *

Нимĕçсен 268-мĕш пехотнăй дивизийĕн 488-мĕш полкĕнчи 5-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ обер-ефрейтор Герман Ульрих çапла каласа панă: «268-мĕш дивизи питех те пысăк çухатусем тӳсрĕ. Çапла, сăмахран, 488-мĕш полкра пĕр батальон кăна тăрса юлнă, вăл та пулин çапăçăва юрăхсăр. Февральпе март уйăхĕсенче полка 8 хутчен çĕнĕрен чылай вăйсем хушса панă. Анчах та пирĕн çухатусем ытла та пысăк пулнипе полк пĕр уйăх хушшинче тенĕ пек пĕтĕмĕшпех пĕтсе ларчĕ. Резервистсене начар вĕрентсе хатĕрленĕ, вĕсем персе пăрахассинчен хăранипе кăна çапăçăва кĕреççĕ. Совет артиллерийĕ пеме тытăнсан, çĕнĕ çынсем паникăна ӳксе, хăйсене валли нимĕнле вырăн тупаймасăр, ухмаха ернĕ пек тараççĕ».

* * *

Ленинград облаçĕнчи Червинская Лука ялĕ хĕррипче, ăна нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă хыççăн, стариксемпе хĕрарăмсен тата ачасен 63 виллине тупнă. Çав çынсене пурне те пыв сапса шăнтнă. Медицина енĕпе пăхса тухнă хыççăн çакна палăртнă: çав мирлĕ çынсене пурне те гитлерла ирсĕрсем персе пăрахнă пулнă. Темиçе хĕрарăма ирĕксĕрлесе пусмăрланă хыççăн штыксемпе чиксе пăрахнă. Нумайĕшĕнне алă пӳрнисене касса татнă, урисене пăрса пăрахнă. Икĕ хĕрарăмăнне кăкăрĕсене касса илнĕ. Нимĕç бандичĕсем ялти мĕнпур пӳртсемпе обществăллă çуртйĕрсене çунтарса янă. Чĕрĕ юлнă хресченсене тыла хăваласа кайнă.

* * *

Белоруссин оккупациленĕ районĕсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕн командирĕнчен Г. юлташран çакăн пек хыпар илнĕ:

«Эпир, митинга пухăннисем, Военнăй Заем кăларнине ырласа саламлатпăр. Заема 12.065 тенкĕлĕх çырăнатпăр.

Сывă пултăр тăван çĕршывпа аслă Сталин!»

Н. юлташ командир пулса тăракан партизансен тепĕр отрячĕ çакăн пек радиограмма панă:

«Военнăй Заем кăларнине саламлатпăр. Заема 26.000 тенкĕлĕх çырăнатпăр.

Тăван Мускава — салам!

Нимĕç оккупанчĕсене — вилĕм!».

Отечественнăй вăрçă фронтĕнче

Хура юн

Т. ялне çитрĕмĕр. Ку яла вăрçăр тăшман аллинчен пирĕн Хĕрлĕ Çар февралĕ уйăхĕнче хăвала туртса илнĕ. [illegible]

[illegible]

— Рус!.. Рус!...—тесе кăшкăрса [illegible]

[illegible]

— Хура юн, — тет батальонăн комиссар Яковлев юлташ.

[illegible]

— Çак хура юна çĕр çине хăвармалла мар! Пĕтермелле!...—теççĕ пирĕн хĕрлĕ воинсем.

Политрук В. ДОЛГОВ (ХУДАРСЕМ).
ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ.

ФАШИСТСЕМ КОЛХОЗРИ СТАРИКСЕНЕ ÇУНТАРСА ЯНĂ

КАЛИНИН ФРОНЧĔ, апрелĕн 15-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Фашистла ирсĕрсем Бабино тата Сиверки ялĕсенчи мĕнпур халăха пĕтĕмпех çаратса тухнă: выльăх-чĕрлĕхне туртса илсе хăвала кайнă, ялĕсене вара тĕппипех çунтарса янă. Бабино ялĕнче гитлеровецсем пĕр сарайне 9 старике хăвалаcа кĕртнĕ, ялти ытти халăха çав сарай умне пухса тăратнă. Унтан гитлеровецсем пухăннă халăх умĕнчех çав сарая гранатăсемпе пеме тытăннă, тăвата енчен те вут тивертсе янă. Ефим Богданов, Егор Сазанов, Александр Никонов тата ыттисем те, пĕтĕмпе 9 ватă колхозник, хăрушла асап тÿссе çунса кайнă.

Е. КОРЯВИЧЕВ.

ÇУРАКИ УМĔН

Кок-сагыза тĕрĕс акар

Кок-сагыз акас умĕн пĕр эрне малатрах вăл уйри условисенче шăтма пултарнине тĕрĕслес пулать. Çакна тума яровизациленĕ кок-сагыз вăрлăхне пĕрик чĕптĕм илсе ещĕксем çине пĕр сантиметр тарăнĕш акса тÿрре ÿстерсе пăхас пулать. Вăрлăх 3—4 кун хушшинче шăтса тухать пулсан, яровизациленĕ вăрлăх уйсене акма юрăхлă. Шăтса тухмасть пулсан, яровизациленĕ вăрлăха акас умĕн ледникран пÿрте е çын пурăнакан температурăллă пÿлĕме илсе кĕрсе çÿхен сарса хумалла. Кунта вăрлăх ÿсме тытăнать. Вăрлăхсем çинче шурă куçсем курăнма пуçласан, вĕсене кăшт кушăхтарнă хыççăн, хăвăртрах акмалла.

Кок-сагыза тикĕс, пĕр пек акас пулсан, вăрлăха вир хывăхĕпе хутăштарса акас пулать. Вăрлăхăн, пĕр пайĕ çумне икĕ пай хывăх хутăштармалла. Паллах, вир хывăхне кок-сагыз вăрлăхĕпе хутăштарас умĕн çумкурăк вăрлăхĕсенчен тата çÿп-çапран тасатмалла, кусемсĕр пуçне ăна противеньсем çине хурса ĕнĕк шăрши тухиччен вĕрилентермелле. Вир хывăхĕ вырăнне пăчкă кĕрпи те (опилка) юрать.

Кок-сагыз вăрлăхне, унăн шăтас пахалăхĕ 100 процента çитиех пулсан, гектар çине 2 килограмм акмалла. Шăтас пахалăхĕ çĕр процентран мĕн чухлĕ каярах, вăрлăхăн хисепне çавăн чухлĕ хăпартмалла. Тĕслĕхрен, вăрлăхăн хуçалăха юрăхлăхĕ 85 процент пулсан, пĕр гектар çине 2 килограмм мар, 2,35 килограмм чухлĕ акмалла.

Яровизациленĕ вăрлăх, паллах, ахаль типĕ вăрлăхран йывăртарах. Кăна шута илме кок-сагыз вăрлăхне эпир яровизацилечченех виçме хушнăччĕ. Яровизацилесе кăштах типĕтнĕ хыççăн вăрлăха каллех турттарса йывăрлăхне пĕлес пулать. Çапла тунипе эпир типĕ вăрлăх яровизациленĕ хыççăн мĕн чухлĕ йывăрланнине пĕлетпĕр.

Тĕслĕхрен: кашни гектар çине кок-сагыз вăрлăхне 2,35 килограмм акмалла пултăр. Вăрлăхсен яровизацилеччен хи йывăрăшĕ 15 килограмм пулнă, яровизациленĕ хыççăн вĕсен йывăрăшĕ 21 килограмма çитнĕ пултăр. Мĕн чухлĕ акмалла-ха пĕр гектар çине яровизациленĕ вăрлăха? Вăл хисеп $2.35\times(12:15)=$ $2,35\times1,4=3,29$ килограмм пулать. Çавăн чухлĕ акмалла та.

Кок-сагыз вăрлăхне çĕр çине пĕр сантиметр çурăран тарăн акмалла мар, тарăнрах аксан вăрлăх шăтса тухма кансĕрленет. Кок-сагыза 44 сантиметр çурă сарлака ретлĕн акаççĕ. Анчах та ансăртарах (ретсен хушши 34—36 сантиметр) пулсан та, акса пăхма юрать. Çапла туни Украинăри хăшпĕр колхозсене тухăçлăрах кок-сагыз туса илме май панă. Кок-сагыза икĕ кассăн аксан вăл татах та тухăçлăрах ÿсме пултарать. Вăрлăх хурăнса пыракан касăсен хушши 20 сантиметр, кашни икĕ касăллă ретăн хушши 44 сантиметр çурă сарлакăш пулмалла.

Кок-сагыза çуркунне ир акас пулать, унăн вăрлăхĕсем нÿрĕ тăпра ăшне выртмалла, акана 1—2 кунта вĕçлемелле. Кок-сагыз акăннă рет çине çиелтен торф е çĕрĕк тăпри хумалла. Ăна пĕр сантиметр хулăнăш тата 7—8 сантиметр сарлакăш хумалла.

Кок-сагыз вăрлăхне тырă акакан сеялкăпах акма пулать. Анчах вăл сеялкăсен сошникĕсем çумне вăрлăха тивĕçлĕ тарăнăша хурса пыракан ребордсем тата çĕре тикĕслетсе пусарса пыракан катоксем майлаштарса лартмалла. Ребордсене 3 миллиметр хулăнăш, 40 миллиметр сарлакăш тимĕртен тăваççĕ, вĕсен диаметрĕ диск диаметрĕнчен 4 сантиметр пĕчĕкрех пулмалла. Диск çумне реборда тăваткĕтеслĕн çыпăçтарса лартаççĕ.

Акнă чухне сеялкăна хытă сăнаса, çĕрпе тулса ларнине сирсе пырас пулать.

Профессор Л. ПЕЛЬЦИХ.

Çуракине—вăйлă лашасем

ВĂРМАР. «Хĕрлĕ Шăхаль», «Заря», «Исваринӑ» «Хĕрлĕ Шептах» колхозсем çуракине вăйлă лашасемпе тухаççĕ. «Хĕрлĕ Шăхаль» колхозăн вăйпитти лашасем—81, вăтам ÿт-пÿллĕ лашасем—17, начар лашасем кунта пĕрре те çук. Ку вăлтах конюхсем лашасене юратса пăхнинчен килнĕ. Вĕсем лашасене лайăх тăрантараççĕ, вăхăтра шăвараççĕ, тасатаççĕ, пули-пулми ĕçе кÿлсе лашасене турткалаттармаççĕ. Çавăн пекех Чупай ялсоветĕнчи «Заря» колхозра та лашасене лайăх пăхаççĕ. Анчах лашасене çуракине тухма вăй хуштарасишĕн районри пур колхозсенче те мар-ха кирлĕ пек тăрăшаççĕ.

«Победитель» колхозра (колхоз председателĕ Антонов) лашасене чăтма çук япăх пăхаççĕ. Çавна пула колхозăн 57 ĕç лашинчен 28-ăшĕ ĕçе кÿлме пачах юрăхсăр, ыттисем начар ÿт-пÿллĕ. «Смычка» колхозра лашасен алатне тирпейсĕр тыткаланă, лашасем çине чунсăрăн пăхнă. Чылай лашасем ĕçе юрăхсăр. Апла пулин те колхоз председателĕ Максимов лашасене пăхас ĕçе лайăхлатассишĕн тăрăшмасть.

Кăçал выльăх апачĕ çитмест тени килĕшÿсĕр. Апла пулин те Кив Шулхан, Çĕнĕ Кавал тата «Ямбай» колхозсенче выльăх апачĕ сахал, çураки иртерме çитмест.

Вăйсăр лашасене çураки пуçланиччен кантарма тăратмалла.

Лашасене çураки умĕн кантарма тăратас тени колхозри пур лашасене те пĕр вăхăтрах ĕçрен хăтарассине пĕлтермест. Кун пек туни васкавлă ĕçсене пурнăçлассине кая тăратса хăварма пултарать. Лашасене ĕçре усă курнă вăхăтрах кантарма пулать.

Вăхăтра ĕçлемелле, вăхăтра тăрантармалла. Кăнтăрла 15—20 минута хушши кантарса апат çитерсен те питех аван пулнă пулĕччĕ. Анчах хăшпĕр колхозниксем лашапа ĕçленĕ чухне çакна тума манаççĕ. Пĕр тухсан лашана шыва яриччене кантармасăр ĕçлетереççĕ.

Лаша ывăнасси кÿлмелли хатĕрсем виçеллĕ пулманнинчен нумай килет. Лашасене çуракине тухма хатĕрленĕ май, кÿлмелли хатĕрсене (хăмăт, йĕнерчĕк, плуг-сÿре туртисене) кашни лашана виçеллĕ тумалла. Çакна хатĕрлеме чылай колхозсем халĕ те тытăнман-ха.

Малашне лашасене пасарсемпе хăнана кайса усăсăр чуптарма чарас пулать.

П. НИКОЛАЕВ.

Трактористсен обязательстви

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Машинно-тракторнăй станцинчи трактористсемпе трактористкăсем Орджоникидзе крайĕнчи трактористкăсен чĕнĕвĕ çине ответлесе çитес çуракинче нихăçанхинчен лайăх ĕçлеме хатĕр. 11 трактористка кăçал çуракинче 700 гектартан кая мар сухалама тата 5 процент горючи перекетлеме обязательство илчĕç.

Çамрăк тракторист Курочкин иртнĕ çулта çуракин малтанхи 15 кунĕ хушшинче 95 гектар сухаланă, кăçал вăл «У—2» тракторпа çав вăхăт хушшинчех 100 гектартан кая мар сухалама сăмах panĕ, тракторист Федотов юлташ 95 гектар сухалама пулчĕ.

Тихонов юлташ иртсе пыракан пĕрремĕш бригада çуракине тухма тĕплĕн хатĕрленсе çитнĕ. Хальхи вăхăтра Тихонов юлташ çамрăк трактористсене трактор çĕмĕрĕлсен ăна мĕнле юсамаллине тĕплĕн вĕрентет, вĕсен пĕлĕвĕсене тĕрĕслет. Бригада членĕсем (пĕтĕмпе 4 трактор) çуракин малтанхи 15 кунĕнче 860 гектар сухалама пулчĕç.

КОЛХОЗА КĔРЕÇÇĔ

СĔНТĔРВĂРРИ. Шуркăл ялсоветĕнчи ялсенче тÿрĕ кăмăллă единоличниксем колхоза кĕреççĕ. Нумаях пулмасть «Çĕнĕ ял» колхоза единоличниксен икĕ хуçалăхĕ кĕчĕ.

Е. ЧЕЛЕВЕРОВ.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Кăнтăр фрончĕ). Укерчĕк çинче: танксен десанчĕ.
М. РЕДКИН фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Лаваль—Гитлерăн шанчăклă тарçи

Виши правительствине „реорганизацилени" çинчен ютçĕршывсенчи хаçатсем мĕн çыраççĕ

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 17-мĕш. (ТАСС). Америкăра тухакан хаçатсем Виши правительстви гитлерла Германие парăнни çинчен нумай çыраççĕ.

«Нью-Йорк таймс» хаçатăн шухăшĕпе, Гитлер Вишири влаçа Лаваль аллине чи малтан ак мĕншĕн панă: вăл Лаваль вăрçă тĕлĕшпе чрезвычайнăй мероприятисем тума пулăшасса кĕтет. Лавале правительствăна лартса, Гитлер Францие тĕнчери фашизма пулăштарасшăн хăй икĕ çул хушши тăрăшни ахалех пулнине йышăнчĕ. Вишири правительствăна «реорганизацилени-пе» тата Гитлер Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Франци политикине хăй майлă улăштарма тăрăшнине пĕтерсе лартасшăн.

Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ çапла çырать: Лаваль Германипе пĕрле килĕштерсе ĕçленин пĕрремĕш результачĕ вăл — Францин рабочийĕсене тата тыткăна лекнĕ салтакĕсене Германин çар промышленноçĕнче ĕçлеме ирĕксĕрлесе пухмалли бюро туса хуни пулать, тет.

ЛОНДОН, апрелĕн 16-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ирĕклĕ Францин Лондонри çыннисен ушкăнĕсенче çапла шутлаççĕ: Лавале Виши правительствин пуçлăхĕ туса хуни Петэн Гитлер умĕнче пĕтĕмĕшпех капитуляци туни пулса тăрать тата нимĕçсен оккупациллĕ режимне Францин мĕнпур территорийĕ çине сарассине пĕлтерет.

Виширен илнĕ сведенисем тăрăх, Лаваль пуринчен малтан «Шалти фронт» çине çавăрăнса пăхать тата вăл хăйĕн пĕрремĕш задачи вырăнне Франци патриочĕсен движенине пусарса хурас задачăна лартать. Швейцарин «Сюисс» хаçачĕн Берлинри корреспонденчĕ шутланă тăрăх, нимĕçсем Францин оккупациленĕ зонипе оккупацилемен зони хушшинчи демаркациллĕ линие пăрахăçа кăлармĕç, мĕншĕн тесен çав линипе усă курса гитлеровецсем Францин Атлантика океанĕн мĕнпур çыранĕсене хăйсем контроль туса тăма пултараççĕ.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Лондон Виши правительстви тĕлĕшпе, унта пулса иртекен улшăнусене курса, çирĕп позици йышăнĕ тесе шутлаççĕ.

ЛОНДОН, апрелĕн 17-мĕш. (ТАСС). Лавале Виши правительствин пуçĕ туса хуни çинчен калаcа, «Дейли экспресс» хаçат çапла çырать: Гитлер, пĕрремĕшĕнчен, хăйĕн Францири тылне хăрушлăхсăр тума, иккĕмĕшĕнчен, çын тĕлĕшпе çĕнĕ резервсем туянма, виççĕмĕшĕнчен, Францин флотне тытса илме тăрăшать. Çакăнпа пĕрлех нимĕçсем Лаваль Франци халăхне контрольлесе тăрас тĕлĕшпе гестапон тискер методĕсене пурнăçа кĕртĕ тесе шанса тăраççĕ.

Пур хаçатсем те чи курăнмалли вырăна Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсене Лавале правительствăна кĕртнĕ пирки Франципе тавар тăратма пăрахма чĕнекен статьясем пичетлеççĕ.

СТОКГОЛЬМ, апрелĕн 17-мĕш. (ТАСС). Лавале правительствăна лартнă май, «Афтонтиднин» хаçатăн Берлинри корреспонденчĕ çапла çырать: «Берлинра çапла шутлаççĕ: Франци флотне тата Франципе унăн колонийĕсенчи базĕсене тĕнĕл держависен аллине парĕç. Çак çывăх вăхăтрах Франция хăйне Англипе США-на хирĕç вăрçакан государство тесе шутлани çинчен пĕлтерĕ, Англипе США Францин оккупацилемен пайне çар экспедицийĕ ярассине тата Парижа, унтан промышленноçлă ытти центрсене те вăйлăнрах бомбардировка тăвассине кĕтсе тăраççĕ. Берлинра Францин оккупацилемен территорийĕ çине десант илсе пырса антарма та пултарĕç, теççĕ, мĕншĕн тесен çав территорин çыранĕсене начар хĕспăшаллантарнă. Петэн аллинче мĕн пурĕ те 100.000 салтак анчах тăрать, çавăнпа Германия Францин «оккупацилемен зонине» хÿтĕлессине хăй çине илесси çинчен пĕлтерме пултарĕ, теççĕ.

Америка правительстви хăйĕн Вишири посолне каялла чĕнсе илнĕ

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 17-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен посолне Легине калаçлама тесе Вашингтона каялла чĕнсе илнĕ, тет.

Америка граждăнĕсене оккупацилемен Франци çĕрĕнчен тухса кайма хушнă

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 16-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Вишири корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Вишири консульстви Францин нимĕçсем оккупацилемен пайĕнче пурăнакан америкăнецсене пурне те хăвăртрах Францирен тухса, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсене таврăнма хушнă.

Парижра Германие хирĕçле выступленисем пулнă

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 16-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Лаваль Вишине кайсанах Парижра фашистсене хирĕçле демонстрацисем пулса иртнĕ. Хулан çурçĕр енчи промышленноçлă районĕнче нимĕç салтакĕсем çине икĕ хутчен тапăннă.

Апрелĕн 16-мĕшĕнче Париж çывăхĕнче çар поездне ÿпĕнтерсе янă. Çавна пула нимĕçсен 40 салтакĕпе офицерĕ вилнĕ.

Англипе Америка хушшинчи калаçусем

ЛОНДОН, апрелĕн 15-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Лондонра халĕ Англипе Америка хушшинчи калаçусем пыраççĕ. Калаçусем çак эрне пĕтиччен пырас пек курăнать. Калаçусем иртнĕ эрне вĕçĕнче пуçланнă. Калаçăва туса пыракансем: Англи енчен—Черчилльпе Англин çар руководителĕсем, Америка енчен Гаррисон, Гопкинс тата Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Генеральнăй штаб начальникĕ генерал Маршалл.

Рейтер агентстви кăтартса панă тăрăх, çапла шутлаççĕ: калаçусенче мĕнпур вăрçă фрончĕсенче оборонăпа контрнаступлени ĕçне йĕркелесе ярасси çинчен, снабжени çинчен, çавăн пекех тата союзниксен пĕрлĕх фронтне экономикăпа дипломати тĕлĕшпе татах та ытларах çирĕплетесси çинчен кÿтсе яваççĕ. Калаçусем пуçлансанах калаçакансен шухăшĕсем пур ыйтусем тĕлĕшпе те пĕр пекех пулни палăрнă, çавăнпа та калаçусем ăнăçлăн пулса пыраççĕ тесе шантарсах калама пур сăлтавсем те пур.

Совет Союзĕ ячĕпе Нью-Йоркра пулнă митинг

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 16-мĕш. (ТАСС). Апрелĕн 13-мĕшĕнче Нью-Йоркри «Карнеги холл» çуртĕнче Совет Союзĕ ячĕпе митинг пулса иртнĕ. Митинга «Протестант» журнал организациленĕ. Унта 3.200 çын пулнă.

Митинга пухăннă çынсем Кентерберийски собор настоятелĕн Джонсонăн Англирен радиотелефон тăрăх панă сăмахне итленĕ. Джонсон Англипе Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсене 1942 çулта Гитлера çапса аркатас шутпа Хĕвеланăç Европăра наступлени пуçарса яма чĕннĕ.

«Протестант» журналăн редакторĕ Лезли хăйĕн сăмахĕнче çапла каланă: тĕнчери вăйсем фашизма хирĕç тăнă çĕрте Совет Союзĕ чи хăватлă тĕрек пулса тăнине ăнланса, гитлеровецсем хăйсен мĕнпур вăйĕсемпе Совет Союзĕ çине пырса тăрăнчĕç, тенĕ.

Парижри «Американский собор святой троицы» ятлă соборăн настоятелĕ пулнăскер Бикман хăйĕн выступленийĕнче çапла каланă: вырăссен правительствипе çарĕ тата халăхĕ «хăйсен мухтавлă традицийĕсенчен те маларах иртсе кайрĕç. Хальхи вăрçăн историне ÿлĕм çырас пулсан, пурин шухăшĕсем те тен çакăн пек пĕр майлă пулĕç: тăшмана çапса аркатас тĕлĕшпе нимĕнле çĕршыв та, нимĕнле çар та тата нимĕнле халăх та вырăссем тунă чухлĕ çитĕнĕ тăвайман».

«Вырăссен çарĕ,—тенĕ Англин Нью-Йоркри генеральнăй консулĕ Хаггард,—пĕтĕм тĕнчене çакна кăтартса парĕ: вырăссен генералĕсем чи хăрушă противникран та маларах та çÿлерех тăраççĕ, вырăссен летчикĕсем сывлăшра нимĕн умĕнче чарăнса тăмасăр вĕçсе çÿреме пултараççĕ, вырăссен танкĕсем Германин танкĕсене çапа-çапа аркатма пултараççĕ. Нимĕçсен техникăллă çарĕсене çапса аркатайман-ха. Анчах та вырăссен çарĕ нимĕçсене шухăш-тăмăл тĕлĕшпе вĕлермеллех пырса çапнă.

Румынире шалти политикăллă кризис çивĕчленсех пырать

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 16-мĕш. (ТАСС). «Крисчен сайенс монитор» хаçатăн Лиссабонри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Румынире вăрттăн ĕçлекен организаци тунă. Организаци ячĕ — «Патриотсен фрончĕ». Çав организацие румынсен паллă партийĕсем пулăшса тăраççĕ, сăмахран, национал-царанистсен партийĕ, либералсен партийĕ. Нумаях пулмасть, «Патриотсен фрончĕн» членĕсем листовка пичетлесе кăларнă. Листовка çакăн пек лозунгпа вĕçленнĕ: «Совет Союзĕпе мир тумалла! Антонескупа Гитлер тĕп пулччăр! Эпир Трансильванине таварма ыйтатпăр! Хăвалăр нимĕçсене Румынирен!»

«Крисчен сайенс монитор» Румынире шалти питех те анлă оппозици пурри çинчен çырать. Çапла шутлаççĕ: «талăх пулакан вырăнсенче чарусăр сăмахсемпе калаçнăшăн» Румынире сахалтан та 400 паллă çынна арестленĕ. Килти арестпа Румынин генеральнăй штабĕн начальникĕ пулнă Якобич пурăнать, çавăн пекех тата национал-царанистсен партин лидерĕ пулнă Михаладе те килти арестпа пурăнать. Радулеску генерала Германийĕн Румынири посланникĕ Киллингер патне янă çырушăн арестленĕ, çав çырура Радулеску вăл Румыни правительствин политикипе килĕшме пултараймасси çинчен çырнă пулнă. Ытти хыпарсем пĕлтернĕ тăрăх, çак кунсенче Румынире концентрациллĕ лагерьте ларакан 200 легионера вĕлернĕ.

Перу правительстви тĕнĕл держависемпе тытакан экономикăллă çыхăнусене татнă

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 16-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресăн Лимари агентстви панă хыпарсем тăрăх, Перу правительстви Перупа тĕнĕл держависем хушшинчи суту-илÿ тата финанс çыхăнăвĕсене татни çинчен пĕлтернĕ. Çакăнпа пĕрлех Перу правительстви тĕнĕл держависем оккупациленĕ çĕршывсенчи çынсемпе тата компанисемпе тытса тăракан экономикăллă çыхăнусене те пĕтермелле тесе йышăннă.

—o—

Совет Союзĕ тăрăх

Ирĕке кăларнă районри колхозниксем çĕнĕ пÿртсем лартаççĕ

Калинин облаçĕнчи Емельяновски районра гитлерла ирсĕрсем вуншар колхоза хурах пусса çаратса тухнă, темĕн чухлĕ ялсене çĕрпе танлаштарса тăватнă. Фашистсен пусмăрĕнчен ирĕке кăларнă ялсенчи халăх çавăнтах çĕнĕ çурт-йĕрсем лартма тытăнчĕ. Çак çулта пĕтĕм районĕпе 500 пÿрт лартма палăртса хунă. Çав ĕç валли 200.000 тенкĕ укçа кивçен панă тата кирлĕ чухлĕ йывăç та панă. Строительствăна вăйлăн тытăннă, ĕç хĕрсе пырать. (ТАСС).

С. С. Прокофьев композиторăн çĕнĕ опери

С. С. Прокофьев композитор çĕнĕ опера çырса пĕтернĕ. Опера ячĕ «Вăрçăпа мир». Ăна вăл Л. Н. Толстойăн ĕмĕр манми «Вăрçăпа мир» ятлă романĕ тăрăх тунă. Оперăра 4 пай, 10 картина.

С. С. Прокофьев часах Мускава килесе кĕтеççĕ. Кунта çав çĕнĕ оперăна малтанлăха пăхса итлесе тухмалла. (ТАСС).

КĔСКЕН

▲ Охотск тинĕсĕ çыранĕсенче пурăнакан пулăçăсем сельдь пулли тытма пуçланă. Вĕсем малтанхи пулла темиçе центнер тытса хатĕрленĕ те ĕнтĕ.

▲ Апрелĕн 20-мĕшĕнче Мускавра архитекторсен çуртĕнче Совет архитекторĕсен союзĕн правленийĕн пленумĕ уçăлать. Кун йĕркинче архитектура академикĕн К. С. Алабянăн доклачĕ: «Совет архитекторĕсен отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенчи задачисем».

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

В Чебоксарском кинотеатре
с 20 апреля
ЕЖЕДНЕВНО
демонстрируется новый звуковой художественно-исторический фильм
„Оборона Царицына"
(Первая серия)
Начало сеансов в 10, 12, 14, 16, 18, 20 и 22 часа.
Открыта предварительная продажа билетов.

РАЗЫСКИВАЕМ КОБЫЛИЦУ
Приметы следующие: масть серая в яблочках, рост 155 см.
Знающих местонахождение просим сообщить по адресу: гор. Чебоксары, Учительская ул., 39, Заготживконторе.

Государственному Тресту НКЭП СССР
ТРЕБУЮТСЯ:
плотники, каменщики, бетонщики, столяры, маляры, штукатуры, подсобники, уборщицы, курьеры и сторожа.
Общежитием и столовой обеспечиваются.
Обращаться по адресу: Кузнечная, 29, отдел кадров.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 98 — Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 205. Ф. 6. 58 64 п: [illegible]